С(чув)
Я47
К
27736-чув.

# тăм тăвайкки вăййисем

петр Яковлев



Национальная библиотека ЧР
4-027736

С(чув)
К Я47
КОНТРОЛ
ЭКЗЕМП

петр Яковлев

# тăм тăвайкки вăййисем

*Сăвăсем*

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке
издательстви
1985

Обязат. экз.

ББҪ 84. Чув 7
Я 44

27736 - чув.

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

**Яковлев П. Я.**

Я 44 Тӑм тӑвайкки вӑййисем: Сӑвӑсем.— Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви, 1985.— 48 с. 2000 экз.

10 п.

Кӗнекери лирика геройӗ — 80-мӗш ҫулсенчи чӑваш ҫамрӑкӗ.

«Савӑнатӑп, садсем ешерсессӗн,
Хурланатӑп, курсан хӑрнине.
Юратса курнисем ҫеҫ пӗлеҫҫӗ
Юратма ҫӑмӑлах маррине»...—

тесе ҫырать П. Яковлев. Вӑхӑт паллине, самана улшӑнӑвне сӑвӑҫ паянхи ҫамрӑк ҫыннӑн ырӑ кӑмӑллӑ чун-чӗрипе шырать.

ББҪ 84Чув7

Я $\frac{4803010200-58}{М 136(03)-85}$ 91—85

ПРОВЕРЕНО
20 06 СЕН 2017

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1985 ҫ.

## ТĂМ ТĂВАЙККИ

*(умсăмах вырăнне)*

*Тăвайккинчи шур юр çинче пĕр саплăк.*
*Вăл чи малтан тухатчĕ çуркунне.*
*Пĕр лаптăк çĕр.*
*Пĕр пĕчĕк-пĕчĕк лаптăк,—*
*Мĕнпе астарнă вăл ача чунне?*
*Вăййи-кулли таçтан-çке тупăнатчĕ,*
*Пĕр пуçăнсан — вĕçне-хĕрне туйман.*
*Мĕнпур шăхлич —*
*Урам ачи унтаччĕ:*
*Çуркуннене куратчĕ чи малтан.*
*Ача вăййи — ача вăййи кăна-ши?*
*Эп ӳснĕçемĕн çитĕнет тĕнче.*
*Тăван Çĕршыв*
*Тем анлăш халĕ маншăн,—*
*Пуçламăшĕ — çак тăм тăвайккинче.*
*Ача вăййи — ача вăййи кăна-ши?*
*Тен, çын хакне виçмешкĕн — тараса?*
*Хăшпĕрисем*
*Мул пухнипех мăнаçлă,*
*Мăнаçлă пул — чуну таса пулсан.*
*Вара тинех эс ăнланса илетĕн*
*Çав аслă çыхăну асамлăхне.*
*Тĕлĕннипе*
*Хуллен чĕркуçленетĕн*
*Сума суса ача тасалăхне.*

## ÇĔРШЫВĂМА

Мĕн чухлĕ сăвăç мухтаман-ши
Тăван Çĕршыв — анне, тесе?
Аннепеле танлаштарманшăн
Шанатăп эс кӳренмессе.

Анне пуриншĕн те пĕрре вăл,
Анчах та шутлă кунĕсем...
Аннесĕре чăтать хĕр-ывăл,—
Çĕршывсăр —
Пурнаймасть этем.

## ИРХИ САВĂ

Майĕпен çутăлать тухăç енĕ,
Çӳл тӳпе ялтăрса улшăнать.
Ирхи кайăк юрлать те пĕр çемĕ,—
Шăплăхран вăтанса шăпланать.

Ыйхăран вăранать те тавралăх,
Саланать шурă-шурă тĕтре...
Сывлăм евĕр таса çутçанталăк.
Ирхине çыннисем те хитре.

## ÇИЛ АЧИ

Аллисене турат хуçса тытса
Чупать пĕр ушкăн шик! те шик! тесе.
Ав, çил ачи çухалнă, тет, таçта,
Çавна шыраççĕ, тет, халь ыттисем.

Тусан килсе сапаççĕ ывçипех,
Çĕр хут уçса пăхаççĕ лупаса,
Эп çеç ларатăп шалт тĕлĕннипе
Хĕври çил ачипе юмахласа.

## СĂМАХ ЭП ИЛСЕ КИЛТĔМ

Çак пурнăç — тĕркĕшӳллĕ цирк-им?
Поэт — сăмах жонглĕрĕ-им вара?
Сире валли сăмах эп илсе килтĕм,
Шанса тăрса юмарт кăмăлăра.

Ывçа хурас — ывçа кĕреймĕ çиçĕм,
Чунрах усрас — чăтса тăраймĕ чун.
Сире валли сăмах эп илсе килтĕм
Чĕре таппи чи аслатиллĕ чух.

Хурланнă чух, тен, пăсăлчĕ сăн-питĕм.
Мĕнех вара? Юсанчĕ савăк чух.
Сире валли сăмах эп илсе килтĕм,
Вăлтассăм пур, анчах суяссăм çук.

Илем тени пурах чунра пурин те,
Ун çутине сӳнмешкĕн парас мар.
Сире валли сăмах эп илсе килтĕм
Чуна уçса ăшпиллĕн калаçма.

## ТӐПЕ ХӖВЕЛПЕ ҪЕҪ ХӖРЕЛТӖР

Ирпе
Хӗвелтухӑҫ хӗрелчӗ.
Унта —
Шӑтса тухрӗ хӗвел.

Каҫпа
Хӗвеланӑҫ хӗрелчӗ.
Унта —
Шӑппӑн шанчӗ хӗвел.

Кашни ҫӗнӗ кун ҫакӑн евӗр
Килинччӗ, кайинччӗ ялан.
Тӳпе хӗвелпе ҫеҫ хӗрелтӗр,—
Ан пӑртӗр курма урӑхла.

## ПАР, ҪЕҪПӖЛ, ХӐВ АКАПУҪНЕ

Пар, Ҫеҫпӗл, хӑв акапуҫне,
Эп те суха туса курам.
Ана тивет кашнин пуҫне,
Кашни ӗҫлет хӑйне кура.

Шапӑртатсах юхать-ҫке тар,
Пӑт-пат ӳкет ана ҫине,
Шӑла ҫыртатӑп шатӑртах:
Тӑвасчӗ тӳрӗ кассине.

Ана тивет кашнин пуҫне,
Кашни йӑтать хӑй пайтине.
Пар, Ҫеҫпӗл, хӑв акапуҫне,
Пар вӑй-хӑват вӗҫне ҫитме.

## ҪАТАРИ ҪУТĂ

Мĕн ҫути-ши, тесе тĕлĕнеттĕмĕр,
Ҫатаран куҫ ҫине хĕм ӳксен.
Ҫӳлти ҫутă вăл — ҫăлтăр, пĕлеттĕмĕр,
Ҫĕр ҫинче ҫăлтăр пур-и? Пĕлмен.

Савăнса чылайччен тинкереттĕмĕр
Тăвайкки ҫамкинчи ҫав ҫутта.
Аякка та пусма шикленеттĕмĕр,—
Ҫухалатчĕ ун хĕмĕ таҫта.

Ҫам шутланă уйри кантăк ванчăкĕ
Ҫухрăм урлă куҫа курнасса.
Ҫам шутланă мăнтарăн ачалăхĕ
Хăй те ҫав ҫутă пек пуласса.

## ЭП МАР

Анчах ҫап-ҫутахчĕ тĕнчен тăват енĕ,
Тулатчĕ телейлĕн ҫиҫсе кăмăлу.
Эп мар ҫавнашкал пурнăҫа йĕркеленĕ:
Аҫта тĕлпулу — ҫавăнта уйрăлу.

Сӳнет те кĕтмесĕр хаваслăх хĕлхемĕ,
Юлатăн вара ҫĕр ҫинче тăр-пĕччен.
Эп мар ҫавнашкал пурнăҫа йĕркеленĕ:
Иртсен ҫĕнĕ савăк — килет кив кичем.

Тӳпе хуплансан хӳхлесе эп ҫӳрем-и?
Упратăп чунра сар хĕвел шевлине.
Эп мар ҫавнашкал пурнăҫа йĕркеленĕ,
Эп мар хурлаканĕ тĕнче йĕркине.

## ШАРТЛАМА

Шартлама. Сив сенкерлӗхӗн хӗмӗ
Уйӑха та ука ҫактарать,
Тӳперен тӑкӑнать те ҫут кӗмӗл,—
Шур юра хӑй тӗсне ҫаптарать.

Тӑм илсе ярасран шикленеҫҫӗ
Шӑнттара чӗпписем — ҫӑлтӑрсем,
Ӑшӑнасчӗ тесе шимплетеҫҫӗ,
Мӑчлатаҫҫӗ тӑр-тӑр чӗтресе.

Ҫунашкал каҫ илемӗ хӑрушӑ,
Йывӑрах пуль ҫулта ҫӳрене.
Ҫут тӗнче шӑпланать те пӗр хушӑ,
Ахлатса ҫурӑлать пӗрене.

## ЧӐН ТУЙӐМ ҪЕҪ

Ҫунассӑм ҫук хитре сӑмахшӑн питӗ,
Ҫунатӑп эпӗ пурнӑҫ вутӗнче.
Пӗлетӗп эп: каҫхи упа лӗппи те
Ҫуталнӑн туйӑнать вут ҫутинче.

Ана ҫут ҫӑлтӑрпа пӑтраштарсассӑн,
Е киленсен ҫунат тусанӗпе,—
Ҫухалтӑр, ҫӗттӗр, пӗттӗр сассӑм
Тул ҫутипе каҫ сӗмӗ сӳннӗ пек.

Ҫашни этемӗн харпӑр хӑй кунҫулӗ.
Хам ҫулӑма суйларӑм эп хамах:
Чӑн туйӑм ҫеҫ, вӗри-вӗри вут-ҫулӑм
Шӑрантармашкӑн тивӗҫ сӑввӑма.

## ÇЫРУ

Кĕркунне çыру çырса хăварнă
Ман валли çăка çулçи çине.
Тăрăшса ăна вăл сыпăçтарнă
Чӳрече çумне, урам енне.

Вăхăтра курмарăм çав, мăнтарăн,
Чӳречем те халĕ йĕп-йĕпе.
Илтĕм çырăвне те — вулаймарăм,—
Тĕсĕ кайнă сивĕ йĕпхӳпе.

Хĕл ларассине хамах пĕлетĕп,
Çырнăччĕ пуль темĕн кирлине.
Ăнланса илмесĕрех иртетĕн,
Ăнланасчĕ тенĕ кĕркунне.

## ÇĔНĔ ХĔЛ ЮРРИ

Йăпшăнса пӳрт умне пухăнаççĕ
Çĕн хĕллен малтанхи кĕрчĕсем.
Çут тĕнче çутинче çаврăнаççĕ
Вĕлтĕр-вĕлтĕр шур юр пĕрчисем.

Тĕнче мар, эпĕ хам тасалатăп
Сывлăшпа, çĕн юрпа киленсе.
Иксĕлмен-ха, эппин, вăй-хăватăм,
Çĕр çинче иксĕлмен илемсем.

Йăпшăнса пӳрт умне çума-çумăн
Пухăнаççĕ кĕртсем майĕпен.
«Çӳл тусен тăррине те юр çунă
Тин çурăлнă арпус çеçки пек...»

## МĔСКЕР ҪУРМА

Мĕскер курма эп килнĕ ҫĕр питне,
Мĕскер курма атте-анне кун панă,
Шăла тивен ҫăлкуҫĕн шерпетне
Ĕҫсе ӳсейнĕ, ҫирĕп ҫунатланнă?

Ытти пиншер чăваш ачи пекех
Вылянă, кулнă, макăрнă та пулĕ,—
Анчах ăнланнă мĕн пĕчĕкренех:
Ҫашни ҫăлкуҫĕн урăхрах симпылĕ,

Ҫашни чечекĕн урăх сăн-сăпат,
Ҫашни тăрин юрри те хăйне майлă.
Пурнатăп халь те ҫакă чăнлăхпа,
Ҫак чăнлăхран ăҫта тарса каяйăн?

Пуриншĕн те ҫак пурăнăҫ — телей,
Пурин те пĕр асаплă шухăш пур-тăр:
Ҫунсан та — ҫунтăр тӳпере хĕвел,
Ҫусан та—пуля мар—ăш ҫумăр ҫутăр.

## САМАНТ

Хĕвел питтиллĕ вырăнсем тухаҫҫĕ,
Пĕтеҫҫĕ иксĕлсе юр кĕрчĕсем,
Тăпра варне урипеле тапаҫҫĕ
Ҫири ача пек пĕчĕк пĕрчĕсем.

Сăрт ҫамкисем вăраххăн пăсланаҫҫĕ,
Тарланă ҫĕр вăйне пухса канать.
Паян — асамлă ҫуралу саманчĕ —
Никам нихҫан ăнланайми самант.

## ХАК

Çак вăхăта кĕтетĕп —
Ырă самантăм пур:
Янкăр кăвак тӳпе те
Кĕмĕл çутиллĕ юр.

Уй варрине тухатăп
Çутă курма çеç мар,
Уй çутинче куратăп
Эп витĕрех хама.

Çут тĕнчери тасалăх
Çак самантра кунта:
Çук-и манра суялăх,
Çук-и манра ултав?

Уй çутипе тĕрĕслентĕм,
Хак параканăм пур:
Янкăр кăвак тӳпе те
Кĕмĕл çутиллĕ юр.

## ВĂХĂТ

Ырри те пулчĕ, пулчĕ усалли те...
Ачалăх, яшлăх иртрĕç пулмалла.
Асра эп иртнĕ кунсене йĕрлетĕп,
Анчах супмастăп иртнĕ кунпала.

Никам те вăхăта чарса курман-ха,
Тилхепине карăнтарса туртса,
Çăварлăх та хыптарайман никам та
Урхамахне карта çине тытса.

Эп вăхăт урапи çинче ларатăп,
Çапать-и сивĕ е сиктеркелет,
Çук, нăйкăшмастăп, юрă эп юрлатăп:
Ман вăхăт юрттине мухтас килет.

«Вăраххăнрах!» — теейменĕ, улталаймăн,
Хăвна, паллах, улталама пулать.
Эп пурăнмарăм çĕр çинче айваннăн
Тахçан мĕлтлетнĕ сар çутăпала.

Анчах, туссем, телей туяс тесессĕн,
Паян кунпа çеç пурăнни сахал!
Малашлăха хăюллăн тинкерсессĕн,
Тинех тупатăн çăлтăрлă хавал.

Қам пурнăçра пĕрлештерме пултарнă
Виç вăхăт сыппине пĕр тĕвĕ пек туса,
Çав çеç чăн-чăн телей патне çывхарнă,
Çав çеç çак пурнăçра чăн-чăн хуçа.

## ХĔВЕЛ АНТТИ

Тӳпе хĕрри çиçет кĕрен кăваккăн,
Шевле вăййи — çур пĕлĕт таранах.
Урисене илсе пусса вăраххăн
Хĕвел канма вăрман хыçне анать.

Паянлăха сыв пул эппин, хĕвелĕм,
Хитрен эс килтĕн те — каян хитрен.
Çулу сан пултăр ĕмĕрех телейлĕ,
Сыв пул, хĕвел, сыв пул ыран ирччен.

Хуллен-хуллен куçран çĕтет кĕренлĕх.
Қăвак тĕтре сырса илет яла.
Шăп...
Таçта поэт çуралчĕ пулмалла.

## ТУМЛАМ

Хĕвелĕ паян вăй-хал пухнă,
Пăхать ăшăтса кăмăлтан.
Пӳртçи хĕррипе ларса тухнă
Пĕр ушкăн çерçи пек тумлам.

Çӳлтен хăраса тинкереççĕ
Хăйсем сикмелли вырăна:
«Ах, чул пулмасан тем пекехчĕ,
Ах, пăрăнăр, эп вăрăнап!»

Вара ăмăртса ӳмлăн-хыçлăн
Чăмаççĕ çĕре шапăрах...
Қушакăн те хырăмĕ выçнă,—
Хуллен йăпшăнса çеç пырать.

Пит тимлĕн, куçран вĕçертмесĕр
Тумлам ӳкессе вăл сыхлать.
Шалтах тĕлĕнет. Тĕлĕнмесĕр,—
Сикет те — таçта çухалать.

## АСЛАТИ

Çиçĕм çиçрĕ ялтлатса,
Шартлатать çут пушă.
Аслати тем ятлаçать,—
Итлеме хăрушă.

Қурăк çĕр çумне выртать.
Хăрăн. Хăрамасăр.
Аслати çапать сăрта.
— Пĕшкĕн, хурамаçăм!

— Хамăн вăрăм ĕмĕрте
Эпĕ тем те курнă:
Е хĕртсе хĕвел хĕртет,
Е лăскать çил урнăн.
Пуç таймастăп çиçĕме —
Эпĕ хам та — турă!
Пушă çапрĕ вĕçĕмех,
Çумăр çурĕ, çурĕ...
Шăмарса та çилленсе
Аслати лăпланчĕ.
Пушă вĕçĕ сӳсленсе
Ҫатара çухалчĕ.

## ТĂРИСЕМ

Çич хут тӳпе чаршавĕ уçăлсассăн,
Унта тухаççĕ пĕчĕк ţăрисем,
Вара юрлаççĕ юрăсем хавассăн
Çĕн кун хĕвелĕпе хĕпĕртесе.

Пурнăçăма ăнланайми пулсассăн,
Тĕтре карриллĕн туйăнсан тĕнче,
Пухатăп пĕрчĕн-пĕрчĕн çĕн хаваслăх
Тăри юрриллĕ çутă хирсенче.

Сахал-и, тăрисем, сире итлерĕм,
Сахал-и ĕмĕр иртрĕ çул çинче!
Ҫунçул çитерчĕ пыл та йӳçĕ эрĕм,
Анчах тăри каймарĕ пуç çинчен.

Хир варринче каллех эп чĕрĕлетĕп,
Тăри юрри чун-чĕреме кĕрет,
Вара кашни сар чĕп пек чечеке те
Ҫĕркуçленсех ман ачашлас килет.

## ÇУРХИ ҪАÇ

Ача чухне тытаттăмăрччĕ эпĕр
Чул айĕнчи ырăшпăтрисене,
Шырать паян çур çилĕ çавăн евĕр
Шур çĕмĕрт айĕнчи савнисене.

Пусма вĕçне ҫаçпа тухса лараттăм
Итлес тесе çурхи çырма шавне,—
Халь тарнă ĕнтĕ ман турпас карапăм,
Мана та çĕмĕрт хăй патне чĕнет.

Çурхи шавпа кĕрлетĕр Шетмĕ шывĕ,
Çавах ҫаçатăп, тăмăп хăраса:
Пуçа çаврать çеçке шăршиллĕ сывлăш,
Тăнран ярать пĕр çивĕч хĕрача.

## МĔСҪЕР САССИПЕ?

Çулла тăван килĕм — веранда
Е хӳшĕ пекскер — утăра,
Автан сассипе эп вăрантăм
Паян та кăвак çутăрах.

Нумай эп тăнларăм. Ăнлантăм
Ҫашни йывăçа-курăка,
Чĕрчун тĕнчипе хаваслантăм,
Ыр сунтăм кашни курака.

Ҫĕрет хăлхана кассăн-кассăн
Чечек çурăлан ырă сас.
Çынсен тĕнчине ăнланмашкăн
Мĕскер сассипе вăранас?

## СИМĔС ÇУЛĂМ

Пĕлĕтĕн çич хучĕ
Çĕтĕлчĕ чăр-чар.
Çулçăн симĕс вучĕ
Чĕртрĕ чĕр кăвар.

Куртăм, ĕненмерĕм
Симĕс çулăма.
Çиçĕмпе пуль терĕм
Куçăма курнать.

Манăн асăмраччĕ
Хĕрлĕ хĕм-вучах...
Çулçă изумручĕ
Çуннă-мĕн чăнах.

## ПУР-ХА МЕХЕЛ

Пур-ха мехел тĕлĕнсе савăнмашкăн,
Пур-ха ачан пек ачашлăх чунра,—
Пĕр ирхине, ыйхăран вăрансассăн,
Эпĕ саламлăп тин çунă юра.

Вăрттăн çуталĕ асамлă тавралăх,
Тĕлĕннипе тăна кĕрĕп вăрах.
Çĕнĕ юрпа килекен çĕн тасалăх
Пÿрт ăшчикне те çутатĕ вара.

Эп чÿрече умнелле утса пырăп,
Тăрăп пăхса чылайччен-чылайччен.
Курăр-ха, тейĕп, епле ырă-ырă
Çак чÿрече те çак çутă тĕнче.



27736-чув
Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

## ПУШӐТ ЛАША

Ҫут уйӑх кантӑкран пӑхатчӗ
Сенкер асамлӑ куҫӗпе,
Анне мана пуҫран лӑпкатчӗ,—
Аса илетӗп... Юмах пек...

Атте лаша туса паратчӗ
Хитре, сап-сарӑ пушӑтран,
Лаши тӑп чарӑнса пӑхатчӗ,—
Тихи чупать-ҫке-ха хыҫран.

Пӗр ватӑ шӑрчӑк ӗмӗр-ӗмӗр
Чӗриклететчӗ ҫурӑкра,
Ҫак самантра пӗртен-пӗр ӗмӗт,—
Тепре итлесчӗ ҫав юрра.

Хыҫра юмахри пек асамлӑн
Чупать пушӑт лаша, чупать...
Ҫук, лаша мар вӑл, ман ачалӑх
Уйрӑлмиех манпа пырать.

## ҪИЛ

Эй, тем те куртӑм, тем те мантӑм —
Чун-чӗренех вырнаҫнӑ пуль:
Ҫав кил. Ҫав пӳрт. Ҫав пилӗк кантӑк.
Ҫӑштах саралнӑ шурӑ тюль.

Ҫунат сарма самант ҫитет те —
Инҫе ҫул-йӗр тухать ума.
Ҫаймашкӑн йӳнӗ те билечӗ,—
Пит хаклӑ, хаклӑ таврӑнма...

Ăçта пуç чикĕн, мĕн эс тăвăн?
Қаç-каç куçа хупса выртсан,
Силлет, лăскать чунра çил-тăвăл
Тăван кил еннелле туртса.

Вара пĕтет ура тĕревĕ,
Сисетĕн: япăх-çке ĕçсем —
Пыма чĕнеççĕ çăлтăр евĕр
Қил маччинчи турат куçсем.

...Çĕр варринче тăрук вăрантăм:
Юхать иккен куçран куççуль.
Çав кил. Çав пӳрт. Çав пилĕк кантăк.
Қăштах саралнă шурă тюль.

## ҚИЛТЕ

Çӳрерĕм, çӳрерĕм, çӳрерĕм,—
Çулсем пит нумай-çке утма.
Вĕсем хыçа юлчĕç пĕрерĕн,—
Умра — ыраш витĕр сукмак.

Унпа эп килтен тухса кайрăм,
Қайма кăмăл пурччĕ инçе,
Вĕçленчĕ-шим ĕнтĕ ман çаврăм,
Е çаврăм тени темиçе?

Халех иксĕлмен-ха хăватăм,
Эп таврăнтăм шăплăх пухма.
Қаллех çав чечекĕн кăвакĕ,
Ыраш шăрки витĕр сукмак.

## УЙĂХ

Сĕм-тĕттĕм каçсем умлăн-хыçлăн
Ҫилсен ăшчике çунтарма,
Пĕрре хĕрлĕ уйăх мăнаçлăн
Тухать хĕм сапса таврана.

Пăхса тăнă чух та сисмелĕх
Шăвать вăл куçа курăнсах.
Анать çĕр çине çут сенкерлĕх
Асамлăн, хăватлăн, тасан.

Пĕтет тĕксĕм каçăн асапĕ,
Тарать тĕксĕм тунсăх таçта,
Юлать çеç сенкерлĕх асамĕ
Чуна витĕрех çутатса.

Юлмасть тек чунра пушă вырăн
Суя тĕркĕшӳлĕх валли.
Иртни туйăнать питĕ ыррăн,
Тата ырă пек малалли.

## ҪАҪХИ УЙРА

Асăмри сенкер чăлансенче
Симĕс арчасем кăшт палăраççĕ,
Тимĕрленĕ çав арчасенче
Иртнĕ кунăмсем ман упранаççĕ.

Ылтăн, кĕмĕл, пăхăр уççипе
Вĕсене никам уçса пăхаймĕ,
Арчари асамлăх мулĕпе
Хам та кирлĕ пек хуçаланаймăп.

Асăмри асамлă, вăрттăн арчасем!
Эпĕ мар, эсир хуçаланатăр!
Уçăлмастăр эп чĕркуçленсен,
Е кĕтмен çĕртен ялт уçăлатăр.

Иртнĕ кунăн йăлтăр çутинче
Эп вара сăвапланса çӳресшĕн,
Арча мар, ялт уçăлать тĕнче,
Тупсăмне халь-халь уçас пек темшĕн.

Тупсăмĕ умне чупса çитсен,
Арчасем хăрушшăн хупăнаççĕ,
Асăма, чуна чĕтрентерсе
Қаç варне мана ывтăнтараççĕ.

Çăлтăрсем çунаççĕ тӳпере...
Çĕр çинчех-мĕн эп утса çӳретĕп.
Нимĕн те пулман пек, чиперех
Ялалла уй хапхинчен кĕретĕп.

## ХУЛАПА СЫВПУЛЛАШНИ

Эп кунта çуралман,
Эп кунта выляман,
Эп лартса ӳстермен çак тирек бульварне.
Тин, çитсессĕн самант
Хуларан уйрăлма,
Эп ăнлантăм кайма çăмăлах маррине.
Қанăç çук чунăмра,—
Çул каймарĕ умран.
Те васкатăп эп хам, те васкать самана.
Яштака тирексен
Çатăлти çулçисем
Қатана юлнăçем ал сулаççĕ мана.

## ТĔЛĔНЎ

Эп тахçан тĕлĕнеттĕм, курсассăн
Çĕн чечек. Е вутчулĕ тупсан.
Сăн-питре ялкăшатчĕ хаваслăх
Çаруран çумăр айĕн чупсан.

Пĕтĕмпех вăхăт хăй картне лартрĕ,
Хăнăхтарчĕ хăйне пăхăнма,
Юмахсен асамне те салатрĕ
Вĕрентсе урăхла пурăнма.

Халь мĕнпе-ши пире тĕлĕнтерĕн?
Мĕн пĕлместпĕр эпир халь, кала!
Тĕнчере пур пĕртен-пĕр матери —
Куçакан, çухалман япала.

Нимĕнех те пулман тĕлĕнмелĕх,
Те чăнах, те курнать тĕлĕкре:
Вĕрене çулçисем кĕренленнĕ!
Вĕрене çулçисем кĕп-кĕрен...

## КĔТЎ КĔРТСЕН

Ял урамне сасартăк пăлхатса,
Çĕкленнĕ евĕр шухă çил пĕр касă,
Утса-чупса, çĕр саслăн шуйханса,
Уй хапхинчен кĕтӳ кĕртет хаваслăн.

Мăнаçланса утаççĕ ĕнесем,
Тулли çилле суллантарса пыраççĕ,
Енчен енне кумаççĕ сурăхсем,
Тусан çинче сар çулçăсем шыраççĕ.

Кĕтӳ ачи ĕшеннĕ уттипе
Юлашкинчен кĕрет, хапха хупмасăр,
Ытамĕнче, ача пек, шур путек
Выртса пырать çеç ярăнса пĕр сассăр.

Саланĕç сурăхсем те килсерен,
Кĕрхи путек те ăшă вырăн тупĕ,
Ăна валли те çитĕ-ха çерем,
Хĕле тӳсмелĕх вăй-хăват та пухĕ.

Хуллен-хуллен яр уçă хапхаран
Каç ĕнтрĕкĕ яла кĕме пуçларĕ,
Хупланчĕ пĕлĕт те çурри таран,
Унтан чăлт çутăлчĕ урам хунарĕ.

Ыр шăплăх, канлĕх анчĕ çĕр çине.
Анчах та лăпкăлăх çырман çав маншăн:
Ӳпкелешетĕп хамăн чĕреме
Çак канлĕхре те канлĕх тупайманшăн.

## КĔРХИ

Илтĕнмест уйра машин кĕрлевĕ,
Илтĕнмеççĕ савăк юрăсем.
Мамонт кĕтĕвĕ çӳренĕ евĕр
Курăнаççĕ улăм урисем.
Тĕксĕм пĕлĕтсем таçта чупаççĕ,
Тунсăхлă. Салхуллă. Кĕркунне.
Пĕлĕтсем пуçĕсене ухаççĕ,
Çитнĕ тейĕн килĕсем умне.
Кĕрĕн урхамахĕсем çухалĕç,
Вăшт! çухалĕç — пăх та эсĕ кур!
Тунсăху сасартăк ялт! çуталĕ
    Тăкăнса кайсассăн шурă юр.

## ТЕЛЕЙ ÇЕÇКИ

Телейӗм çӗн уйăх пулса çуралать.
Чунра — калама та çук çăмăл.
Ачашшăн каçхи çӗн чечек çурăлать,
Чечек варринче — манăн кăмăл.

Çурхи çутă каç çӗр çине аннăран,
Шур çӗмӗрт çеçки чӗннӗрен-ши,
Ҫаллех эп ача пек, каллех эп айван,
Ҫаллех эп телейлӗ темскершӗн.

Ҫунçулăм йӗрлерӗ питре пӗрмече,
Вара эпӗ лайăх ăнлантăм:
Телей — пӗр самантлăх çуралнă чечек.
Эппин, эсӗ манăн, самантăм!

Çӳретӗп асамлă каçхи пахчара,
Паян — манăн чунăн уявӗ.
Сенкер çутăра палăрать катаран
Шур тӗтӗмлӗ çӗмӗрт вылявӗ.

## ҪЕРМЕН

Эп улăхра çӳреттӗм пӗчченех.
Пуç тăрринче — тӳпе уççин сенкерӗ.
Чупса хăпартăм та çӳл ту çине,
Тӗлӗннипе куçа та ӗненмерӗм.

Çӗрпе тӳпе пӗрлешнӗ вырăнта
Йăлтăртатса ларать кӗреннӗн
Ӗмӗтӗмре çуралнă ăрăмчах,
Ӗмӗтӗмре çуралнă çут керменӗм.

Ķуça илмесĕр тăтăм тинкерсе,
Вара кермен чăн-чăннине ĕнентĕм,
Чупса çитсе курасшăнччĕ кĕрсе,
Анчах та, пĕчĕкскер, часах ĕшентĕм.

Хăшсем каларĕç: çук унта кермен,
Ķурас тесен, ху ларт, ӳссессĕн, терĕç,
Анчах та эп пуйма ĕмĕтленмен,
Ĕмĕтĕмре — асамлă тĕлĕнтермĕш.

Сенкерлĕхре ларать кĕрен кермен,
Ун еннелле утатăп эп васкавлăн,
Çĕр çиййĕнче юмах тăвас тесен,
Çав юмаха ĕненмеллех-çке манăн.

## ÇУРХИ ÇУМĂР ХЫÇÇĂН

Çурхи сипетлĕ, ăшă-ăшă çумăр
Уй-хир питне çемçен çуса кайсан,
Уй-хир çеç мар, чиперленет ман кăмăл,
Уйра çеç мар, чунра та тап-таса.

Шевле саррипллĕ ешĕл уй-хир урлă
Утатăп эп инçе, инçе, инçе...
Утса тăранайми пек ырă пурнăç,
Ķурса тăранайми пек ыр тĕнче.

Сар кун илемĕпе, çынсем, киленĕр,
Хытса ларма ан парăр чунсене,
Ķуратăр-и, пăч турпаллиййĕ евĕр
Тухаççĕ тăрисем çӳл тӳпене.

## ПĔЛЕСЧĔ МАН

Ирхи шевле тĕрлерĕ ҫут ӳкерчĕк.
Тĕрлерĕ те йăпанчĕ пуль.
Кĕрен те шурă улмуҫҫи чечекĕ,
Тĕл-тĕл сенкер сăнли те пур.

Ҫурхи илемлĕх, шурă улмуҫҫилĕх!
Пĕлесчĕ ман, хăш-хăш садра,
Хăш улмуҫҫин ытарайми ҫеҫкийĕ
Сана валли сăмах упрать.

## ҪĔМĔРТ

Кăпăк пек ҫĕмĕрт шап-шурă,
Ĕмĕт пек ҫĕмĕрт таса.
Шурă та, ҫутă та ырă
Ҫĕмĕрт ларать йыхăрса:

«Манăн айра миҫе мăшăр
Тупрĕ-ши савăк, телей.
Килĕр, ĕҫтерĕп ыр шăршă,
Курăр, кăтартăп илем».

Пырăттăм, курăттăм эпĕ
Сан ҫывăхна тепĕр хут.
Пур теприсем, эп пĕлетĕп,—
Чунăм туртни унта ҫук.

Вăхăт ытла та час шурĕ,
Ҫĕмĕрт, пыраймăп, каҫар.
Кăпăк пек эсĕ шап-шурă,
Ĕмĕт пек эсĕ таса.

## ÇĔН ÇУЛ КАÇ

Сĕтел йăтайми апат-çимĕç тавра
Çынсем Çĕн çула кĕтсе илччĕр,
Атя, шăппăн-шăппăн тухар та тарар,—
Шап-шурă вăрман аса килчĕ.

Ан тив, çил-тăман улашса, тулхăрса
Юхтартăр юка çиле майăн,
Кĕрт ăшшĕн, хыçран икĕ йĕр хăварса,
Сана юмаха илсе кайăп.

Унта, хĕллехи тап-таса вăрманта,
Мана ăнланма эсĕ тăрăш,
Унта, çын ури таптаман вырăнта,
Ӳсет чиперкке пĕчĕк чăрăш.

Атя, шăппăн-шăппăн утар вăрмана,
Эп чăрăш тавра çаврăнкалăп,
Хăюлăх çитерĕп те, тин, аранах
Саватăп сана тесе калăп.

## АН ТИРКЕ

Чун савниçĕм, ытлах ан тирке,
Айăплах пуль хамах, эп хамах:
Çырăнмасть сан çинчен ман йĕрке,
Тупăнмасть каламашкăн сăмах.

Мĕскерпе танлаштарăп сана
Тĕрлĕ-тĕрлĕ хитре тĕнчере?
Ним те çук. Кирлĕ мар шырама.
Ма тесен, эсĕ манăн — пĕрре.

## ÇУМĂР ВИТĔР

Çумăр умĕн ăш вăркать,
Тăвăну — чунра.
Çумăр витĕр çул выртать
Халĕ ман умра.

Çумăр витĕр çул выртать,
Эпĕ каяс çул.
Çулшăн мар пуль ăш вăркать,
Тусăм, саншăн пуль.

Урăхла пурна пĕлмес,
Кӳренсе ан юл.
Ир те, каç та кĕттерме
Эп çуралнă пуль.

## МАЛТАНХИ ЮРАТУ

Санпала кимĕпе ярăнатпăр,
Сан валли эп татап шур чечек...
Варкăш çил ачашлать тапхăр-тапхăр
Вĕт тумлам сирпĕтсе шăрçа пек.

Вăтанса, куç хӳрин эс сăнатăн,
Хĕрелетĕн, ытарлăн кулса.
Малтанхи чун савниçĕм, çунатăм,
Çакăн пек эсĕ юлнă аса.

Малтанхи савние кам-ха манĕ?
Асилетĕп хитре тĕлĕк пек.
Кимĕпе те нихçан ярăнман эп,
Нихăçан та татман шур чечек.

## ПУШ ЧУЧЧУ

Çилпе сулкаланать урам хунарĕ,
Пӳрте суллантарса пуш чуччу пек.
Çĕр каçипех куçа хупса пулмарĕ,—
Ķăвак çутиллĕн палăрать тӳпе.

Санран хитри, чапли сахал-и тетĕп,
Сахал-и тетĕп ыр кăмăллисем.
Ҳама суйса выртса, хамах йӳтетĕп,
Ăшри вута кăшт сӳнтерес тесе.

Тепре савса çунатлăн хĕмленес те
Сана аса та илес мар текех,
Анчах эс тĕлĕкри пек тĕлленместĕн,
Тухатăн куç умне чăн-чăн пекех.

Тек тӳсейместĕп. Чĕптĕм вăй юлмарĕ
Эп çитĕп сан патна тул çутипех.
Кунта сулкаланать урам хунарĕ,
Пӳрте суллантарса пуш чуччу пек.

## ĂСАТМАСТĂН ИРСЕРЕН

Ăсатмастăн ирсерен, каçпа кĕтместĕн,—
Тӳр килмерĕ юнашар пулма.
Хушăран мана та асилен пуль эсĕ
Çамрăк вăхăтпа кăшт йăпанма.

Лараймарĕç пĕр турат çине ик кайăк,
Çавраймарĕç юратса йăва.
Чунăм тăвăнса килсен те, пурпĕр калăп:
Çĕр çинче пурришĕн эс
ТАВАХ!

## ҪӐВАҪЛӐХӐМ

Ҫӑвак тӳпене эп юратрӑм,
Юратрӑм ҫӑвак куҫсене,
Тен, ҫавӑншӑн час ҫӑвакартрӑм
Хура сӑмала ҫӳҫӗме.

Ытти тӗссене хурламастӑп,
Анчах пулнӑ ҫамрӑк, айван:
Ху савнӑ тӗсе юратма та
Пит йывӑррине шутламан.

Шутлатӑп та,—
Ӳпкелешместӗп:
Упратӑп ҫӑваклӑхӑма.
Пӗрре тӗс яни вӑл — тепре те
Пултарӗ пуль, тетӗп, сутма.

Нимле хӗрлӗ мӑкӑнь ҫӑварӗ,
Нимле йӑлтӑр-ялтӑр кӗрнек
Манра хуплама пултармарӗ
Ҫав утмӑлтурат сенкерне.

## ШӐНКӐРТАТСА ЮХАТЬ-И ШЕТМӖ ШЫВӖ

Шӑнкӑртатса юхать-и Шетмӗ шывӗ,
Вылять-и уйӑх ҫуттӑн хум ҫинче,
Пӗрре вӗри, тепре сасартӑк сивӗ
Пулса килет мана ҫак каҫсенче.
Ав, леш енче яшсем хавасланаҫҫӗ,
Илтӗнкелет хӗрсем хитрен кулни.
Тахҫан эп хам та пӗр хӗре савсаччӗ,
Вӑтанчӑклӑн каланӑччӗ: савни.

Сисмесĕрех иртет иккен кунçулăм,
Сахал-и юхрĕ Шетмĕ унтанпа.
Çыр хĕррипе эп хывнă утма çулăм
Хупланнă ĕнтĕ халĕ хупахпа.

Эй, чуптума-и, юнашар утма та
Телейччĕ те асапчĕ — харăсах.
Савман теместĕп. Эп пурне те мантăм,
Анчах та манăçмасть çав хĕрача.

Шăнкăртатса юхатчĕ Шетмĕ шывĕ,
Вылятчĕ уйăх çуттăн хум çинче,
Ҫил хушшине лармарĕ пирĕн шилĕк,
Ĕмĕрлĕхе вăл ларчĕ чунсенче.

Шутлатăп та: ку пулнă ĕнтĕ «ĕлĕк»,
Шутлатăп та: ĕнерхи пек асра...
Темле телейлĕ, тутлă-тутлă тĕлĕк
Тĕлленнĕ евĕр уйăхлă каçра.

## ҪĔР ÇУТИ

Ҫилтен ачисем тухса кайнă
Инкен пушă пӳрчĕ пекех
Тирпейлĕ, салху та сăпайлă
Чăваш уйĕ кĕр çутипе.
Тулать тунсăхпа тăнăç кăмăл,
Вара ян ярса шăплăха
Ура айĕнчи сарă хăмăл
Çăвас çумăра шартлатать.
Час килĕ йĕпхӳллĕ çанталăк,
Тӳпе те хупланĕ йăлтах...
Ун чух асăнса пурăнмалăх
Паян сарă кĕр çутатать.

## ШЕТМĔ

Уйăх тӳпене хăпарнă
Ыр юмах тума каçран.
Шăппăн-шăппăн та ытарлăн
Шетмĕ тем калать паян.

Ķам шыв чĕлхине пĕлет-ши?
Ķам пĕлтерĕ-ши мана?
Уйăхпи çӳлтен итлет те,—
Хăяймасть-ши калама?

Вĕçсĕр туйăнать итлессĕн,
Шетмĕ, санăн сассуна...
Эп каяссине пĕлсе, тен,
Эсĕ такăр çул сунан?

Аслă, анлă çĕршывра та
Ķапăр, шĕкĕр хулара,
Тен, хăвна манма хушмастăн,
Тен, çавна халь хыпарлан?

Эп кайнишĕн ан ятла та —
Эп сăвапсăр этем мар:
Ķаясса та эп каятăп
Сан патна тавăрăнма.

## ĶАРТСЕМ

Эп ӳснине палăртмашкăн
Алăк сулли хĕррине
Чĕрнĕ атте картăн-картăн
Ӳсĕмĕн йĕрĕсене.

Йывăр та пурнăç—телейлĕ,—
Курчĕ пурне те ачу.
Эпĕ те урăх ӳсеймĕп.
Карт картаканĕ те çук.
Юлчĕ, курса пурăнмалăх,
Халĕ, ӳссе çитĕнсен,
Вăрттăн çырулăх та палăк
Алăк сулли хĕрринче:
«Эпĕр сире кун кăтартнă,
Пулнă пуль йывăр, анчах
Савнă сире, пит юратнă,
Савăр эсир те çаплах...»

## ÇИЛ-ТĂВĂЛ ÇЕММИ

Кĕрле, кĕрле, мăрье оргáнĕ,
Кала çил-тăвăл кĕввине.
Пĕлмерĕм эп: мĕскер вăл канлĕх,
Халь тин пĕлессĕм те килмест.

Кĕрле, кĕрле, мăрье оргáнĕ,
Пĕлтер çил-тăвăл хыпарне.
Чунпа чирли сана ылханĕ,
Сыввишĕн эсĕ ху — парне.

Кĕрле, кĕрле, мăрье оргáнĕ,
Эп килтĕм катари çултан.
Элле, çил-тăвăлтан хăрам-и,
Хăраманскер унран тулта.

Кĕрле, кĕрле, мăрье оргáнĕ,
Юрла, çил-тăвăл, юрруна.
Кайран эп канăп. Ĕмĕр канăп.
Кунта эп килнĕ — пурăнма.

## ВĔÇЕВ

*Петĕр Эйзина*

Çӳл тӳпери тăрисене курсан,
Эп вĕсене, чăнах та, кĕвĕçеттĕм,—
Çӳл тӳпене курас килетчĕ ман,
Анчах та тĕлĕкре кăна вĕçеттĕм.

Вĕçми те пултăм çитĕнсе çитсен.
Мĕн юлчĕ ман? Хура тăпра сăвапĕ
Тата эп ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсен
Ялан вĕçме илĕртекен хăвачĕ.

Кун çутипе çӳрерĕм савăнса,
Ыр çынсене курса тăранаймарăм,
Çак çĕр çинчи ултавлăха манса
Ӳмри çула та лайăхураймарăм.

Ай, пăхрăм та — айра шырлан мĕлки,
Пуçхĕрлĕн чăмрăм эп унта сасартăк,—
Эй, тĕлĕнтермĕш пурнăçăн йĕрки:
Пурнас килнипеле вĕçсе хăпартăм.

Вĕçсе хăпартăм янкăр тӳпене,
Тăри чунне ăнлантăм тин, мăнтарăн,
Сенкерлĕхе те туйрăм эп тинех,
Çак çĕр питне те урăхла сăнарăм.

Йăлтлатрĕ чăнлăх. Сĕврĕлчĕ суя.
Ан тив, çӳлти тăри хитре те питĕ —
Апатланма анса ларать уя,
Ана çинчех йăви те ун, чĕппи те...

Эп куртăм! Куртăм! Çут тĕнче — таса,
Вара тăрин пек кĕвĕленчĕ сассăм.
Ăçтан пире çĕнтертĕр-ха усал?
Ӳкес чухне
Çунат шăтать пулсассăн.

## ÇУЛĔ ПУЛТĂР ТАКĂР

Тӳпене вут хыпнăн
Кăварланчĕ тухăç.
Тăпăр-тăпăр сасă килчĕ аякран:

Виçĕ шухă ут ман —
Виçĕ çутă шухăш —
Ĕрĕхсе çӳреççĕ ешĕл улăхра.

Ылтăн пулă çук ман,
Çук ман çăрттан пулă,—
Юмахра кăна пуль унашкал асам.

Чĕн йĕвенĕм пур ман,
Пур ман курăс тăлă,—
Қам-ха сире тытĕ, хам тăрăшмасан?

Утнă чухне утрăм,
Чупнă чухне чупрăм,—
Юнашар илтетĕп ут кĕçеннине.

Виçĕ шухă ут ман,—
Виçĕ çутă шухăш,—
Çăмăл мар иркӳлĕм вĕсене кӳлме.

Пĕкĕ пултăр капăр,
Вĕçтĕр такан хĕмĕ,
Шăнкăр-шăнкăр тутăр кĕмĕл шăнкăрав.

Туртара ташлатăр
Виçĕ шухă ĕмĕт,
Çулĕ пултăр такăр, утсене кура.

## ИНҪЕТ ЧЁНСЕН

Пĕр кун теприн пекех пулсассăн,
Қуссассăн лăпкăн пĕр йĕрпе,
Тăнлав таппи тапать пĕр саслăн,
Улатакка такканă пек.

Қичемленет вара кил умĕ,
Туртма пуçлать таçта инçет...
Қуçса çӳренĕ халăх юнĕ
Тапать-ши юн тымарĕнче?

Е хам лара-тăра пĕлместĕп,
Ăшталанатăп ним çукран:
Қил çавăрас та, тĕпленес те,
Пăхса ларасчĕ кантăкран.

Тен, ватлăхра çитеймĕ хăтлăх,
Яш чух пăлхавлă пулнăран.
Ăна пĕлместĕп. Халĕ шăплăх
Йăсăрланса çунать чунра.

Апла-капла та шухăшлатăп,—
Сӳнтерейместĕп вутăма.
Вара улатакка таккать те
Эп йĕнерлетĕп утăма.

## ÇЁР АЧИ

Çул çинче вăйран-халтан кайсассăн,
Урараи иртми пулсан ура,
Нăйкăшса çемçе тӳшек ыйтмастăп,—
Манăн вырăн — ешĕл улăхра.

Эп канатăп. Мĕн вăл çул инкекĕ?
Чĕр нуша — ниçта та утмасан.
Эп телейлĕ: пĕтнĕкĕн чечекĕ
Пылакне мана сĕнет пулсан.

Эп телейлĕ: варкăш вылясассăн,
Ман ума чĕркуçленсе ларса
Пирвайхи савни пекех ачашшăн
Çӳçĕме турасăр турасан.

Çĕр ачи — çĕртен эп вăй илетĕп,
Ĕмĕте илетĕп тӳперен,
Ма тесессĕн, хам та курăк евĕр
Ӳснĕ эпĕ çутă тĕнчере.

Пĕр çула тухсассăн, таврăнмаççĕ,
Малаллах утаççĕ чĕррисем,
Ҫатара куç шартарса çунаççĕ
Ҫĕмĕл тĕслĕ пĕлĕт хĕррисем.

## ЮРЛАТĂР ЧУН

Çăлкуçĕсен çут кĕмĕл шăнкăравĕ,
Йĕс шăнкăрав пек тăрисен юрри,
Хĕрӳ ĕç шавĕ, уй-хирсен янравĕ,—
Эсир манран этем тумарăр-и?
Уй-хир юррисĕр — чĕмсĕр юлăп эпĕ,
Уй-хир çутисĕр — сĕмсĕр те усал.
Тĕнче тĕсне хурлакана шеллетĕп:
Тĕнче таса вăл — ху таса пулсан.
Юрлатăр чун! Юрлатăр та ыраттăр,—
Ăна тăмран йăваласа туман,
Ҫирлех пулсан, ял чанĕ пек янратăр
Шăнкравсенчен шăратнă чунăм ман.

## ВИÇĔ ЫВĂÇ ТĂПРА

Улăх. Лĕпĕш. Шыв хĕрри те мечĕк.
Вĕçсĕр вăйă-кулă урамра.
Эп ачалăх пĕтессе кĕтменччĕ,—
Юлчĕ виçĕ ывăç шăн тăпра.

Аннене ялан пурнать пуль теттĕм,—
Мĕншĕн манăн ывçăра — тăпра?
Тăприне куççульпеле йĕпетрĕм,
Ятăм шăтăка хăра-хăра.

Ĕненместĕп. Аннене пытартăм.
Ашăм-чунăм килчĕ те çунса,
Макăрма уя ача пек тартăм,
Таврăнтăм калла мăн çын пулса.

## ИРХИ ҪУРĂНУ

Хĕвел тухман-ха. Тĕссĕр илĕм-тилĕм
Ҫĕрет, кĕрет сенкер чӳречерен.
Çуралнă килĕм, тăванах та килĕм,
Ҫаллех тĕлленнĕ кĕçĕр тĕлĕкре.

Ҫуçа курнать-ши ир сенкерĕ витĕр,
Вăрантăм-ши е вăранса çитмен?
Пупленĕ пек манпа кив пĕрени те,
Ҫашни хăми чĕнет тем итлеме.

Пĕр пулăм пулчĕ чăнпала асамлăх,
Сехет сасси те вăрттăн, урăхрах,
Иртсе кайман пек ытарми ачалăх,
Анчах килет пек яшлăх улахран.

Куҫа курнать-ши ир сенкерӗ витӗр?
Умрах, ҫумрах пек, ӗненеймӗн те:
Атте ҫăматă тӗплесе ларни те,
Анне кăштăртатни те тӗпелте.

Ак шуҫăм хăй сăнне чӳречерен ӳкерчӗ.
Кӗрен шевле вылять мачча ҫинче.
Паян ирпе ăнлантăм эп, мӗскершӗн
Чăваш ҫӗре кӗресшӗн килӗнчех.

## «ШУХĂШЛАВҪĂ»

Каллех чăматăп ешӗл чăтлăха.
Вăрман ешӗллӗхне сирсе ишетӗп.
Ыр ҫутҫанталăк панă хăтлăха,
Чӗре таппи пек, чи шалтан сисетӗп.

Ытам сарать кашни упасарри,
Хăлаҫăмран сарлакарах хăлаҫӗ,—
Пулать-и ҫӗр ҫинче кунтан ырри?
Ҫак ырлăхра усал пулма юрать-и?
Яштак е кукăр-макăр йывăҫсем
Ҫӳлти хӗвелӗн ҫутине тухасшăн
Пуҫне ҫӗклеҫҫӗ мӗн пултариччен,
Хӗвел пайăркипе ҫӳҫне тураҫҫӗ.
Ларатăп эпӗ ват юман ҫумне.
Скульптура тейӗн, тепӗр «Шухăшлавҫă»,
Мӗнле майпа усал ҫынсен чунне
Ҫак илемпе чӗртсе кăштах ҫутам-ши?

Чылай ларатăп ешӗл чăтлăхра.
Вăрман хитре те—йывăҫпа пурнаймăн...
Вӗҫсе иртет сар кайăк ҫывăхран,
Ҫынсем патне илсе каять сар кайăк.

## ШУРӐ ПӖЛӖТСЕМ

Улӑха кӗпçе татма кайсассӑн,
Шетмӗ хӗрринче вылянӑ чух,
Туйӑнатчӗ çут тӗнче пит аслӑн,—
Тавраллах выртатчӗ утма çул.

Пуç тӗлне анатчӗ кӗмӗл ӗмӗт
Ярӑнса хуракӑш тӗкӗ пек.
Куçӑмра çиçетчӗ ӗмӗт хӗмӗ,—
Чуптаратчӗ хӑйӗн çулӗпе.

Шурӑ-шурӑ пӗлӗтсем юхатчӗç
Юмахри хула пулса тӑрса.
Эпӗ хам та шурӑ хулараччӗ,
Çавӑнтах çӳреттӗм, апӑрша.

Этеме ӑçтан пӗлсе çитерӗн?
Куртӑм хуласем, ӳссе çитсен,
Эсӗр çеç асран тухма пӗлмерӗр:
Улӑх, йӳç кӗпçе, шур пӗлӗтсем...

## ЕТКЕРӖМ

Килсе кӗрет кӗтмесӗр хуйӑх,
Тӗксӗмленет вара тӗнче.
Анне тенки пек çутӑ уйӑх
Юлать çеç пӗлӗт хыçӗнче.

Пулать çак пурнӑçӑн тӳнтерӗ:
Савни савмасть, туссем инçе...
Тӗнче çути тӗксӗмленмерӗ
Ман вӑйсӑрланнӑ куçсенче.

Тĕксĕмленмешкĕн пуçласассăн
Атте çилли пек çил килет,
Вĕрет те варкăш кассăн-кассăн
Умри тĕтре сĕмне сирет.

Анне çут тенкине хăварнă
Çакса кăвак тӳпе çине.
Атте хăй çиллине хăварнă
Вăш-вăш çилсенĕнваррине.

Пуçа уссассăн та — ӳкмерĕм,
Ӳкме памарĕ сирĕн пил.
Нумай та мар пек ман еткерĕм:
Çап-çутă уйăх, ăшă çил...

## ИКĔ ЧĔКЕÇ

Хăмăр-кăвак пĕлĕтсем хушшинче
Сарă хĕвел пайăрки капăрланчĕ.
Хăтсăррăн туйăннă тĕксĕм тĕнче
Пĕр самантрах канăçса сапăрланчĕ.
Шăхăрчĕç ухă йĕппи евĕрлех
Çӳл тӳпене чĕкеçсем, чăтаймасăр,
Вĕçрĕç пĕчченнĕн те, вĕçрĕç пĕрле,—
Пĕр-пĕрине куçĕнчен çухатмасăр.

Чăпăл кĕреççĕ хĕвел шевлипе,
Пайăркипе выляса шăлăнаççĕ.
Шырăр, çынсем те, ялтравлă тӳпе,
Тĕксĕммисем хăйсемех тупăнаççĕ.
Хурлăхпала ырлăхсем хушшинче
Пирĕн те кун çутипе савăнасчĕ,
Курăр, хитре пĕлĕтсем хушшинче
Икĕ чĕкеç шевлепе çăвăнаççĕ.

## АЙ, ШАРТЛАМА!

Ай, шартлама! Юман та шартлатать.
Ăна илтсессĕн кашкăр тарĕ, улĕ.
Упаçырми текен пĕчик ялта
Ҫăмакасем те хутса ячĕç пулĕ...

Пăхса тăраттăм çӳллĕ сăрт çинчен:
Лере — шур тĕтĕм юписем ял çийĕн...
Шур çиппеле çĕн ёлка лăссинчен
Тетте пӳртсем çакса тултарнă тейĕн.

Ҫу ёлĕкчĕ. Тахçан. Ача чухне.
Халь ĕнтĕ ялĕ урăх сăн-сăпатлă,
Эпир те ĕнтĕ çӳç пĕрчисене
Витме май пур пек, пытарса туратпăр.

Ай, шартлама! Ҫилет çине-çинех.
Чĕреçĕм, чăт. Шăн йывăç пек ан çурăл.
Чупса хăпартăм çӳллĕ сăрт çине,
Анчах та ĕнтĕ сăрчĕ те халь урăх.

Пăхса тăратăп: çук кунта пӳртсем,
Ҫуралнă-ӳснĕ ялăм катара-çке...
Шур мрамор евĕр тĕтĕм юписем
Чун тӳпине тĕкĕлесе тăраççĕ.

## УЛĂХРА

Ăçтан килтĕн, унтах кай, салхулăх,
Эс курмастăн-им, манăн умра
Пин чечеклĕ, пин çемĕллĕ улăх,
Вĕлле хурчĕ вĕçет улăхра.

Эс курмастăн-им, пурăнăç — тĕрлĕ.
Усала ылмаштарĕ ырри,—
Ав, çап-çамрăк хĕр пичĕ пек хĕрлĕн
Вăтанса илĕртет çĕр çырли.

Шăрчăксем сĕрме купăс сĕреççĕ,
Юр юрлаççĕ вĕлле хурчĕсем,
Улăхра савăнаççĕ, йĕмеççĕ,
Тесшĕн пулĕ мана та вĕсем.

Эп йĕместĕп. Темскершĕн хурлантăм.
Ăнланас теменрен-ши çынсем?
Ăнланма та мана йывăр мар та —
Эп пыл хурчĕ — пухатăп илем.

Ăçтан килтĕн, унтах кай, салхулăх,
Ман юрлас юррăмсем савăкрах.
Пин чечеклĕ, пин çемĕллĕ улăх,
Вĕлле хурчĕ вĕçет улăхра.

## ĶАÇ

Вуникĕ хутлă çĕнĕ çурт хыçне
Хĕвел хуллен кусса анса выртсассăн,
Йĕркен-йĕркен хунар уçсан куçне,
Ķаçхи хула шăрçисене уртсассăн,
Ķушак çури пек каçăн çурисем
Тĕм ăшĕнче вылянине курсассăн,
Аса илетĕп ял каçĕсене...

## ЧЕЧЕКСЕМ

Пурччĕ урам еннелле чӳрече,
Ун леш енче — тĕнчеччĕ.
Чи малтанхи эпĕ курнă чечек —
Хĕрлĕ, хитре хĕвелччĕ.

Ӳсрĕ пĕрле, эпĕ çитĕннĕçем,
Ешĕл çаранлă ырлăх.
Çĕр чĕрçинчи тĕрлĕрен чечексем
Манăн мĕнпур пек пурлăх.

Эп йывăрпа пуçăма лăш уссан,
Эсĕр ӳкме памарăр,
Эп çăмăлпа пуçăма каçăртсан,
Эсĕр куçран пăхмарăр,—

Утрăм вара пурнăç çулĕпеле
Тӳрĕ утас тесех-çке.
Тĕрĕс-и, йăнăш-и — кам-ха пĕлет?
Тен, чечексем пĕлеççĕ?

Ĕмĕр тени кашниннех пĕрре çех.
Хут чечеке юратмастăм.
Хурăр, туссем, ман çине чĕр чечек
Маншăн хĕвел шансассăн.

## *ХĂЛАТ ХĂВАЧĔ*

*(хыççăмах вырăнне)*

*Эп канас пурнăçпа пурнаймарăм,*
*Шухăш пусрĕ пĕве кĕрсенех.*
*Хам çуралнă çĕре кăмăлларăм,*
*Кăмăлларăм ĕçчен çынсене.*

*Савăнатăп садсем ешерсессĕн,*
*Хурланатăп курсан хăрнине.*
*Юратса курнисем çеç пĕлеççĕ*
*Юратма çăмăлах маррине.*

*Тен, пĕрре вăй-хăват çитереймĕп,*
*Ывăнса кайса ӳкĕп палтах.*
*Ун чухне те кăвак тӳпере эп*
*Тупăп хам ăмсанан хăлата.*

*Çав хăлат хăватне туйса илĕп,*
*Çĕнĕ вăй килсе кĕрĕ тинех.*
*Ярăнса-ярăнса çĕрĕм çийĕн*
*Вĕçсе иртĕп вара ирхине.*

**ТУПМАЛЛИ**


Тăм тăвайкки (*умсăмах вырăнне*) . 3
Çĕршывăма . . . . . . . 5
Ирхи сăвă . . . . . . . —
Çил ачи . . . . . . . . 6
Сăмах эп илсе килтĕм . . . . —
Тӳпе хĕвелпе çеç хĕрелтĕр . . . 7
Пар, Çеçпĕл, хăв акапуçне . . . —
Қатари çутă . . . . . . 8
Эп мар . . . . . . . . —
Шартлама . . . . . . . 9
Чăн туйăм çеç . . . . . . —
Çыру . . . . . . . . 10
Çĕнĕ хĕл юрри . . . . . . —
Мĕскер курма . . . . . . 11
Самант . . . . . . . . —
Хак . . . . . . . . . 12
Вăхăт . . . . . . . . —
Хĕвел антти . . . . . . 13
Тумлам . . . . . . . . 14
Аслати . . . . . . . . —
Тăрисем . . . . . . . 15
Çурхи каç . . . . . . . 16
Мĕскер сассипе? . . . . . . —
Симĕс çулăм . . . . . . 17
Пур-ха мехел . . . . . . —
Пушăт лаша . . . . . . 18

Кил . . . . . . . . —
Килте . . . . . . . . 19
Уйăх . . . . . . . . 20
Каçхи уйра . . . . . . —
Хулапа сывпуллашни . . . . 21
Тĕлĕнÿ . . . . . . . 22
Кĕтÿ кĕртсен . . . . . . —
Кĕрхи . . . . . . . . 23
Телей çеçки . . . . . . 24
Кермен . . . . . . . —
Çурхи çумăр хыççăн . . . . 25
Пĕлесчĕ ман . . . . . . 26
Çĕмĕрт . . . . . . . —
Çĕн çул каç . . . . . . 27
Ан тирке . . . . . . . —
Çумăр витĕр . . . . . . 28
Малтанхи юрату . . . . . —
Пуш чуччу . . . . . . 29
Ăсатмастăн ирсерен . . . . —
Кăваклăхăм . . . . . . 30
Шăнкăртатса юхать-и Шетмĕ шывĕ —
Кĕр çути . . . . . . . 31
Шетмĕ . . . . . . . 32
Картсем . . . . . . . —
Çил-тăвăл çемми . . . . . 33
Вĕçев . . . . . . . 34
Çулĕ пултăр такăр . . . . 35
Инçет чĕнсен . . . . . . 36
Çĕр ачи . . . . . . . —
Юрлатăр чун . . . . . . 37
Виçĕ ывăç тăпра . . . . . 38
Ирхи курăну . . . . . . —
«Шухăшлавçă» . . . . . . 39
Шурă пĕлĕтсем . . . . . 40
Еткерĕм . . . . . . . —
Икĕ чĕкеç . . . . . . . 41

Ай, шартлама! . . . . . . . 42
Улăхра . . . . . . . . . —
Ќаç . . . . . . . . . 43
Чечексем . . . . . . . 44
Хăлат хăвачĕ *(хыççăмах вырăнне)* . 45

*Для старшего школьного возраста*

**Петр Яковлевич ЯКОВЛЕВ**

**ИГРЫ НА ПРОТАЛИНАХ**

Стихи

На чувашском языке

Редактор *П. Е. Эйзин*
Художник *В. А. Смирнов*
Художественнный редактор *Э. М. Юрьев*
Технический редактор *Г. С. Самсонова*
Корректор *Л. А. Иванова*

ИБ 1656

Сдано в набор 16.01.85. Подписано в печать 25.04.85. НТ 35162. Формат $70 \times 90^1/_{32}$. Бумага офсетная № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 1,75. Усл. кр.-отт. 1,80. Уч.-изд. л. 1,69. Тираж 2000 экз. Заказ № 217. Изд. № 91. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли,
428019, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

**10 пус**

петр Яковлев

Петр Яковлев 1950 çулта Красноармейски районĕнчи Упаçырми ялĕнче çуралнă. Мăн Шетмĕре вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн çарта пулнă, Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Тĕпчев институтĕнче тата шкулта ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра Чăваш патшалăх университетĕнче вĕрентет, литературăра кăна мар, ăслăлăхра та вăй хурать.
«Тăм тăвайкки вăййисем»— авторăн иккĕмĕш кĕнеки.





Чăваш
кĕнеке
издательстви